**Адрес:**
Чăваш Республики,
Муркаш районĕ,
Муркаш сали,
Хĕрлĕ тӳрем, 5

**Телефон**
(8 83541) 62-6-36

**Ĕç вăхăчĕ :**
8:00—18:00
Шăмат кун 8:00— 17:00
Вырсарни кун—канмалли кун



**Чăваш Республикинчи Муркаш районĕн**
**«Централизациленĕ библиотека системи»**
**муниципаллă бюджет культура учрежденийĕ**



# «Чăваш поэзийĕн çутă çăлтăрĕ»

Чăваш литературин никĕсне хываканĕ,
поэчĕ, драматургĕ, фольклорисчĕ К.В.
Иванов 130 çул тултарнă май.

**Муркаш сали**
**2020**



К.В.Иванов – тĕлĕнмелле ăста сăвăç, чăваш поэзийĕн классикĕ, тĕнчипе паллă «Нарспи» поэма авторĕ.

К.В.Иванов Пушкăрт Республикин Пелепей районне кĕрекен Слакпуç ялĕнче 1890-мĕш çулхи çу уйăхĕн 27-мĕшĕнче (кивĕ стильпе – 15-мĕшĕнче) çуралнă. Унăн ашшĕ – ĕçчен те пуян хресчен Ваçинкка, Микулай Çимунччă тиек ывăлĕ – кăра кăмăллă çивĕч ăслă çын, писарь пулнă. Вăл вырăсла, тутарла, пушкăртла аван пĕлнĕ. Хаçат-журнал çырăнса илнĕ, çĕр ĕç никĕсне тĕпченĕ, хăш çул тырă мĕнле пулассине чухласа тăнипе яла тĕлĕнтернĕ. Ваçинкка ачи-пăчине вĕрентесшĕн пулнă. Пĕчĕккĕ чухне Кĕçтук кукамăш патĕнче чылай пурăннă. 1898 çулта 8 çула çитсен Кĕçтука ялти пуçламăш шкула янă. Тепĕр 3 çултан ăна ашшĕн йăмăкĕ Евгения Николаевна Иванова Кекен ялне хăй патне куçарнă, вĕрентнĕ.



1902-мĕш çулхине Чĕмпĕрти чăваш шкулне илсе кайнă. Анчах вăл çул никама та вĕренме илмен (2 çулта пĕрре йышăннă). Вара Кĕçтука Пелепейри хула училищине вырнаçтарнă. 1903-мĕш çулхине Пелепейри шкула пăрахса кĕркунне Чĕмпĕрти чăваш шкулне вĕренме кĕнĕ. Малашне унăн кун-çулĕ, пĕтĕмĕшле илсен, Чĕмпĕрте иртнĕ. Тăрăшуллă та ăнкаруллă Кĕçтук питĕ тăрăшса вĕреннĕ; вырăс литературин классикĕсене (Пушкина, Лермонтова, Кольцова, Некрасова, Тургенева, Толстоя т. ыт. те ) юратса вуланă. Вырăс классикĕсен сăвви-юррисемпе, калав-повеçĕсемпе, чăваш писателĕсен ал çырăвĕсемпе паллашни Ивановăн кăмăлне çĕклентерсе янă; чăваш чĕлхин пуянлăхне, хăйĕн пултарулăхĕн вăйне тарăнрах туйса илме пулăшнă. Çав вăхăтрах вăл шкул мастерскойĕнчен тухма пĕлмен. Унăн йывăçран темĕн те пĕр касса кăларасси килнĕ, сăрсемпе ӳкерме юратнă. Йывăçранах пичетлемелли машинка та тунă. Сĕтел-пукан е çӳлĕк майлаççи уншăн алă ăйййи çеç пулнă. Спектакльсем валли декорацисем сăрланă, çынсен сăнне ӳкернĕ. Чăвашсен мĕлке ӳнерне те вăлах пуçарса янă.

1905 – 1907 çулсенче Раççейре пĕрремĕш вырăс пăлхавăрĕ пулса иртет. Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче те пăлханаççĕ. Пăлханакан чăваш çамрăкĕсем вĕренӳ программине анлăлатма, вырăс мар

**Библиогрфи:**


**Артемьев, Ю. М.** К. В. Иванов / Ю. М. Артемьев // Артемьев Ю. Ĕмĕр пуçламăшĕ : 1900–1917 çулсенчи чăв. лит. ист. очеркĕ. – Шупашкар, 1998. – С. 285–288.

**Асамат, С.** Нарспи вăрттăнлăхĕ : [К. В. Ивановăн "Нарспи" поэми çинчен] / Светлана Асамат // Хыпар. - 2005. - 17 çĕртме. - С. 4. - Вĕçĕ. Пуçламăшĕ иртнĕ 114, 115-мĕш номерсенче.

**Борлен, Б.** (Ф. Карим премийĕн лауреачĕ). "Нарспие" наркăмăшлантарас марччĕ / Борис Борлен // Тăван Атăл : литературăпа культура тата искусство журналĕ. - 2009. - № 2. - С. 147-148.

**Виноградов, Ю. М.** Ачасен "Нарспи" поэмăна халаллалнă хайлавĕсем : (чĕлхеçĕ тишкерĕвĕ) / Ю. М. Виноградов // Халăх шкулĕ = Народная школа : мас. пед. журн. - 2009. - № 2 (101). - С. 46-48.

**Георгиева, Н.** Çитес çул - Иванов çулталăкĕ : [К. В. Иванов çуралнăранпа 120 çул çитнине хатĕрленсе ирттерес енĕпе йĕркелӳ комитечĕ тата тĕп мероприятисен планне хатĕрлени çинчен] / Надежда Георгиева // Хыпар. - 2009. - 2 раштав (№ 231).

**Игнатьева, И.** Ырă ячĕ ĕмĕр чаплă : [наци музейĕн пĕрремĕш директорĕ Михаил Петрович Петров-Тинехпи 1922 çулта Константин Васильевич Иванов пирки асăнса çырни çинчен] / Ирина Игнатьева // Тантăш. - 2005. - 2 çĕртме (№ 22). - С. 4.

**Кириллова, И. Ю.** К. В. Ивановăн "Нарспи" поэми XX ĕмĕрĕн 20-30-мĕш çулĕсенчи литература критикинче / И. Ю. Кириллова // Современная Нарспиана : итоги и перспективы : материалы межрегион. науч.-практ. конф. - 2008. - ("Нарспи" в зеркале современного литературоведения).

**Краснова, Т.** "Çĕнĕ ăру "Нарспие" çĕнĕлле хаклать : [Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институтĕнче "К. В. Ивановăн "Нарспи" поэми чăваш литературин чаплă хайлавĕ" регионсем хушшинчи ăслăлăхпа практика конференцийĕ иртни çинчен] / Татьяна Краснова // Хыпар. - 2008. - 22 юпа.

**Ласточкина, А.** "Нарспи" - манăн пурнăçăмра / Анфиса Ласточкина // Хыпар : чăваш халăх хаçачĕ. - 2009. - 30 çу (№ 102/103). - С. 11. - (Культура : хушма кăларăм / кăларăма Надежда Смирнова хатĕрленĕ ; № 6).

**Петрова, В.** "Иванов - хĕвеллĕ çуркунне..." : [К. Иванов çуралнăранпа 118 çул çитнĕ май унăн палăкĕ умĕнче савăнăçлă митинг иртни çинчен] / В. Петрова // Чăваш хĕрарăмĕ. - 2008. - 31 çу - 6 çĕртме (№ 21). - С. 3.

## *К.В. Ивановăн Тăван çĕршывĕ*



Слакпуç ирĕклĕхĕ



К. Иванов çуралнă çурт



Таса, сывă çăлкуçсем





К. Иванов ячĕпе укçа, марка кăларанă. Ăна хисеплесе Шупашкарта палăк лартнă, урам, библиотека, музей, театр ятне панă.



халăх ачисене аслă шкулсене кĕмешкĕн ирĕк пама, вĕренекенсене хăйсен пĕлĕвне ÿстерме кирлĕ кĕнекесене ирĕклĕн вулама, театрсене çÿреме чармалла мар тесе, чăваш ачисенчен кулакан Кочуров текен учительне кăларса яма ыйтнă. Çакă К.В. Иванова та хавхалантарнă. Вăл «Марсельеза» юрра чăвашла куçарать. Ертсе пыракансем каярахпа паллă поэт пулнă Тайăр Тимки, чăваш облаçне туса хурсан ертсе пыракансем хушшинче паллă çын пулса тăнă Даниил Эльменпа Тимофей Кривов, Михаил Акимов çыравçă пулнă.

1907 çулхи пуш уйăхĕн 5-мĕшĕнче Чĕмпĕрти Чăваш шкулĕнче вĕренекенсем политикăлла митингсем туса ирттернĕ. Пуш уйăхĕн 7-мĕшĕнче вара митинга хутшăннă 37 вĕренекене шкултан «урăх ниçта та вĕренме юрамасть» текен хут тыттарса кăларса янă.

К.В. Иванов вара тăван ялне таврăнать, хресчен ĕçне кÿленет, май килнĕ самантсенче халăх сăмахлă — хĕн тĕслĕхĕсене пухать.

Константин Васильевичăн литературăри таланчĕ шăпах пĕрремĕш революци тапхăрĕнче йĕркеленме тытăнать, вăй илсе пырать. К.В. Иванов – аслă та вăйлă талант. Çамрăк кайăк вĕçме вĕреннĕ пек вăл хăйĕн тапса тăракан пултару вăйне виçме Кольцовпа Некрасовăн, Огарёвпа Майковăн хăш-пĕр сăввисене тата Лермонтовăн «Иван ĕмпÿпе çамрăк сыхлавçă тата сатур Калашник хуçа çинчен хунă юрă» поэмăна тата 7 сăввине куçарнă. Акă вăл куçарнă «Сăпка юрри» :

**Сăпка юрри.**

Çывăр, ачам, çывăрах!
Ыйху тутлă пултăрах!
Сана пăхма илтĕм эп!
Ăмăрт кайăк, çил, хĕвел.
Ăмăрт вĕçрĕ килелле,
Хĕвел анчĕ ту айне.
Виçĕ каçран çилĕ те
Вĕçрĕ амăшĕ патне.
Çилтен ыйтать амăшĕ:
- Ăçта эсĕ пултăн-ши?
Çăлтăрсемпе вăрçрăн-и?
Е хумсене çапрăн-и?

И.Я. Яковлев хăйĕн пултаруллă вĕренекенĕсене яланах асра тытса тăнă, вĕсене вăл хăй шкулне каялла чĕнсе илсе куçару ĕçне явăçтарнă. К.В. Иванов вара чăвашла вĕренӳ кĕнекисене редакцилет, корректурине вулать, калавсемпе юмахсем куçарать. Укерчĕксем тăвать. Унсăр пуçне хăй те çырать.



Пĕр туххăмра тенĕ пек «Ватă вăрман шухăшĕ», «Кĕркунне», «Килсе çитрĕ кĕркунне» сăвăсем çырса хурать. «Икĕ хĕр», «Тимĕр тылă», «Тăлăх арăм» сăвăлла юмах-халапне якатать. И.Я. Яковлев хистенипе «Нарспи» поэмăна улăштарать.

К.В. Иванов хайлавĕсем пĕрремĕш хут 1908 çулта «Чăваш халапĕсем» кĕнекере пичетленсе тухаççĕ. «Нарспи» поэма вулакансене каçăхтарсах ярать.

Петĕр Хусанкай: «Пире паллă хайлавĕсене К.В. Иванов 1906-1908 çулсенче, çулталăк çурă – икĕ çул хушшинче, хăй 17-18 çулта чухне çырнă. Ку пире йăлтах тĕлĕнтерсе ярать. 3 пин йĕрке сăвăра ĕлĕкхи чăваш пурнăçĕн пĕтĕм энциклопедийĕ курăнать…», - тенĕ.

«Нарспи» поэма пичетленнĕ хыççăн поэт 7 çул пурăнать. Калама çук йывăр шухăш, шырав, асап çулĕсем вĕсем. Тен, çав çулсенче вăл вилĕмсĕр юрăсем шăратнă, анчах вĕсем халăх умне тухаймасăрах пĕтнĕ. Аппăшĕ аса илнĕ тăрăх, сăвăç ал çырăвĕн арчине ашшĕ килĕнчен граждан вăрçи вăхăтĕнче пĕр шурă офицер илсе тухса кайнă, çухатнă.

1909 çулхи çуркунне 19-ти сăвăç халăх учителĕн ятне илме экстерн йĕркипе экзамен тытать. Чĕмпĕрти арçын ачасен пĕрремĕш гимназийĕ хут парсанах вăл хуларан тухса каять. Анчах ĕç вырăнĕ тупаймасть. Вара Шупашкар уесĕнчи Иккасси шкулĕнчен кăларса янă Н.Ф. Беляев пăлхавçăпа пĕрле Сызрань уесĕнчи Коптĕвка станцийĕ таврашĕнче çĕр виççе çу каçать.

Чĕмпĕрти чăваш шкулĕпе унти кĕнеке кăларас ĕç çине тапăнни поэт шухăш-ĕмĕчĕсене татать. 1910 çулхи юпа уйăхĕнче И.Я. Яковлев К.В. Иванова Чĕмпĕре килме чĕнсе ярать. Вăл поэта хĕрсен 2 класлă училищине тирпейлĕ çырупа ӳкерӳ вĕрентӳçине вырнаçтарать. Вăл Ф. Павлов драматургпа, композиторпа «Нарспи» поэма тăрăх чăваш оперине йĕркелеме шухăшлать.

Сăвăçăн 1911-13 çулсенчи литература ĕçĕ Иван Трофимов кăларнă букварьсене кĕртме кĕске калавсем куçарнинче, ăна ӳкерчĕксемпе илемлетнинче тата Пётр Пазухина, чăваш юррисене пухса кĕнеке кăларакана, чăваш халăх сăмахлăхĕн тĕслĕхĕсене кĕнеке туса кăларма пулăшнинче çеç палăрать. Пĕрремĕш вырăс пăлхавăрĕ хыççăн пуçланнă хура реакци çулĕсем сăвăçа чĕмсĕрлетсе лартнă. Талант пăхăнман, малалла аталанма май шыранă. К.В. Иванов сăрăсемпе ӳкерме тытăнать. Питĕрти Илемĕш академине кĕмелли экзаменсене хатĕрленет. 1913 çулта Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче вĕренекенсем «Иван Сусанин» оперăна сцена çине кăлараççĕ. Константин Васильевич ăна валли паха декорацисем ăсталать. Вăл канăçа пĕлмесĕр ĕçлет. Анчах йĕкĕте синкерĕ сыхласах тăрать: ăстаçă ӳпкепе, вар-хырăм чирĕпе аптăраса ӳкет. Унăн çамрăк пуçĕ çине сирсе сирĕлеймен хурлăх анать. Шăпа картинчен иртме çуккине туйса 1914 çулхине çулла вăл М.Ю. Лермонтов вил тăпри çине пуç тайма Тархана кайса килет. Вара хура кĕркунне 3-мĕш хут Слакпуçне таврăнать. Хальхинче вăл тăван ялĕнче ĕмĕрлĕхех юлать.



1915 çулхи пуш уйăхĕн 26 (13)-мĕшĕнче сăвăç чĕри тапма чарăнать. Çапла вăхăтсăр сӳнет чăваш поэзийĕн çăлтăрĕ. Вăл хăварнă сутă вара пирĕн пата нумай теçетке çул иртсен те йăлтăртатаса килме пăрахмĕ.



Поэтăн тăван çĕрĕ çинче, Слакпуçĕнче, Константин Васильевич çуралнăран 50 çул çитнĕ май ăна халалласа музей уçнă. Кунта музей комплексĕ вырнаçнă, асăну паркĕ, поэтăн вилтăпри çинчи палăк тата халăх ăсталăхĕн произведенийĕсемпе кил-çуртри хатĕрĕсем упранакан икĕ çурт .

Константин Васильевич Иванов – чăваш халăхĕн мăнаçлăхĕпе мухтавĕ, çĕнĕ çыруллă сăмахлăха пуçараканĕ. Хайлавĕсен тĕшшипе килĕшуллĕн К.В. Иванова пурте кăмăллă чăваш сăмахлăхĕн классикĕ тетпĕр. Поэтăн вилĕмсĕрлĕхĕ çакăнта та курăнать. К. Иванов произведенийĕсен конфликчĕ яланах çивĕч. Паянхи кун та вăл хускатнă проблемăсем актуаллăхне çухатман.